**Анатолий ЮМАН**

# Кам вăл «Т.В.А»?



1940-мĕш çулсен вĕçĕнче Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă тăрăхĕнче Вăта Тимĕрçен вăтам шкулĕ чи пысăкки шутланнă. Йывăç пурасене пĕрлештерсе пысăклатнă кивĕ шкул çуртĕнче занятисем вицĕ сменăпа иртетчĕç. Кашни класра 30 ачаран кая мар пулнă темелле.

Пирĕн вăхăтра аслă классенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентме Шупашкарта тин çеç И.И.Яковлев ячĕллĕ пединститутран вĕренсе тухнă Чăваш Ен хĕрĕ Антонина Петровна Петрова килсе çитрĕ. Пĕвĕпе çӳллех марччĕ вăл, тулли ӳт-пӳллĕ, çырă сӳсне хыçалалла çавăрса тĕвĕлетчĕ. Кусĕнче чĕрĕ хĕлхем çиçетчĕ. Сăпай тытатчĕ хăйне. Пуш сăмах вакламастчĕ. Вĕренӳ çулĕ пуçланнă хыççăнах хăш-пĕр ача урокра шарлама пăхни те пулкалатчĕ – вăл вара пире, темлĕ майпа, хăй енне çавăрма пултарчĕ.

Маншăн тăван чĕлхепе литература чи юратнă предметсем шутланатчĕç. Эпĕ ĕнтĕ ун чухне вырăнти хаçатсенче малтанхи тĕрленчĕксене çеç мар, сăвă-калавсем те пичетлеме пуçланăччĕ. Алăпа çырса журнал кăларас шухăш та пурччĕ пирĕн. Темме вăл ĕмĕт пурнăçланаймарĕ. Стена хаçатне вара вăхăтра кăларса тăма пуçларăмăр.

Революцичченхи чăваш литературине вĕреннĕ чухне чăвашсен малтанхи «Хыпар» хаçатĕнче1907 çулта пичетленсе тухнă икĕ сăвва, «Ялта» тата «Камран пулăшу ыйтас?» ятлисене, вуласа кăтартрĕ çĕнĕ учительница. Анчах вĕсене кам çырни паллă мар иккен. Аяла çеç «Т.В.А.» тесе çырнă. Авторне М.Сироткин профессор та палăртайман-мĕн кĕнекере.

Сăввисем вара пирĕншĕн, чăнах та, кăсăк пулчĕç. Кĕске сăвăсенчех ĕлĕкхи ял пурнăçне курăмлăн сăнласа кăтартма пултарнă çыравçи.

Вăтам шкулпа эпĕ 1952 çулта сывпуллашрăм. Хама пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнă вĕрентекенсемпе нихăçан та çыхăну тытма пăрахман, тĕл пулсан кашнинчех тăван литературăри ĕç-пуçсем çинчен чун-чĕререн калаçнă. Вăтам Тимĕрçенте вĕсем иккĕнччĕ: пĕри – Кивĕ Улхашри çичĕ çуллă шкулта Иванов-Белозеров-Семенов учительсен династине пуçарса янă, И.Я.Яковлев просветитель «мăнучки», «Нарспи» авторĕн К. В. Иванован вĕренекенĕ пулнă Пелагея Петровна Иванова, тепри – Антонина Петровна Петрова. Антонина Петровна хăйĕн телейне Вăта Тимĕрçен ялĕнчех тупрĕ, унта

шкул хуҫалӑхне майлаштарса ертсе пынӑ ял ҫыннипе ҫемье ҫавӑрса тӗпленчӗ. Шел, халӗ вӗсем иккӗшӗ те пирӗн хушӑра ҫук ӗнтӗ. Ырӑ ӗҫӗсем вара ҫӗнӗ ӑрури ял халӑхӗн асӗнче ҫаплах пурӑнаҫҫӗ.

«Хыпар» хаҫатра ҫапӑнса тухнӑ сӑвӑсен авторӗ вара тепӗр утмӑл ҫултан тин тупӑнчӗ. Вӑл пирӗн тӑрӑхри Анат Тимӗрҫен ялӗнче ҫуралса ӳснӗ вун тӑватӑ ҫулхи чӑваш хӗрӗ Анисия Васильевна Итеҫ (Княгина) пулнӑ иккен. Сӑвӑ айӗнчи «Т.В.А.» саспаллисем «Тимӗрҫенсем Ваҫҫа Аниҫҫи» тенине пӗлтернӗ. Мӗн пур сенсаци пекех ку ӑнсӑртран палӑрнӑ. Сӑвӑҫ шӑллӗ Виктор Васильевич, профессийӗпе геолог пулнӑскер, тӑван ене канма таврӑнсан Хусанта ӑнсӑртран Константин Петров чӑваш журналисчӗпе тӗл пулнӑ. Вӗсен калаҫӑвӗ «Т.В.А.» вӑрттӑнлӑхне татса панипе вӗҫленет.

Чӑвашсен малтанхи хӗрарӑм сӑвӑҫи Ваҫҫа Аниҫҫи тӑван тӑрӑхӗнчен инҫех те мар, Мелекес ҫывӑхӗнчи Аврали ятлӑ чӑваш ялӗнче, шкулта ӗҫлесе пурӑннӑ иккен. Сӑвӑсем вӑл каярахпа та ҫырнӑ, анчах вӗсене пичет валли тесе мар, чунӗ хушнипе ҫырса упранӑ. Мӑшӑрӗпе пӗрле пӗр хушӑ Ҫӗпӗре тухса кайма та тивнӗ унӑн, унтан каллех тӑван тӑрӑха таврӑннӑ. 1926 ҫултан пуҫласа 21 ҫул Ямпак ялӗнче вӑй хунӑ.

Ҫӑмӑл пулман унӑн пурнӑҫӗ. Упӑшки вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗрсен йышлӑ ачине пӗччӗнех ура ҫине тӑратма тивнӗ ӑна. Вӑрҫӑ ҫулӗсенчи йывӑрлӑхсем ҫинчен каламӑпӑр та.

«Ялав» журналӑн 1965 ҫулхи 3-мӗш номерӗнче Константин Петровӑн «Ваҫҫа Аниҫҫи», ҫав ҫулах «Коммунизм ялавӗ» хаҫатра Михаил Юрьевӑн «Малтанхи хӗрарӑм-поэт» статйисем ҫапӑнса тухсан эпӗ вӗсене каҫса кайсах вуласа тухрӑм. 1966 ҫулта унӑн «Ҫутӑ ҫӑлтӑр хӑпарчӗ» кӗнеки пичетленсе тухрӗ. Ум сӑмахне Стихван Шавлы ҫырнӑччӗ. Вӑл «Ваҫҫа Аниҫҫи – тӑван поэзин пирвайхи чӗкеҫӗ» ятлӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн Ваҫҫа Аниҫҫин чапӗ ҫисӗмле хӑвӑртлӑхпа Раҫҫей талккишне сарӑлчӗ. Унӑн пултарулӑхне пропагандӑлас тӗлӗшпе Димитровград хулинче ӗҫлесе пурӑннӑ Яков Рогачев ҫыравҫӑ-тусӑм тата хамӑр ял ҫынни, 1930-мӗш ҫулсенче «Колхозник» хаҫатра ӗҫленӗ Афанасий Лисков журналист, нумай тӑрӑшрӗҫ. Влаҫ чӑваш поэзийӗн малтанхи чӗкеҫӗн пурнӑҫне ватлӑх ҫулӗсенче чылай ҫӑмӑллӑх кӳчӗ, ӑна Димитровград хулинче хӑтлӑ хваттер пачӗ. 75 ҫул тултарнӑ ятпа вара хулари «Восход» ятлӑ культура керменӗнче чаплӑ уяв иртрӗ. Ӑна хавхаланса йӗркелекенӗ Ваҫҫа Аниҫҫи ентешӗ, Анат Тимӗрҫенти халӑх музейӗн малтанхи директорӗ, вӑрҫӑпа ӗҫ ветеранӗ Иван Васильевич Дубов пулчӗ. Уява Шупашкартан икӗ паллӑ поэт – Уйӑп Мишшипе Юрий Скворцов – пынӑччӗ.

Ҫитнӗ кунах Ваҫҫа Аниҫҫипе паллашрӑмӑр. Хваттерӗ унӑн пысӑк марччӗ, килнӗ хӑнасене пурне те пӗр харӑс йышӑнма ҫукчӗ. Пирӗн ушкӑна Анисия Васильевна уйрӑмах хумханса кӗтсе илчӗ, хӑйӗн тин ҫеҫ тухнӑ кӗнекине ӑшӑ сӑмахсем ҫырса парнелерӗ. Сӑнран пӑхсан вӑл хӑйӗн ҫулӗсенчен ҫамрӑкрах пек курӑнатчӗ. Калаҫасса питӗ лӑпкӑн, сӑпайлӑн калаҫатчӗ. Калаҫнӑ хушӑра ӑшӑ кулли те кӑмӑла ҫӗклетчӗ, шӳт тума юратни те сисӗнчӗ.

Уявра эпӗ Аниҫҫа аппана халаллана сӑвва вуласа патӑм. Экспромтларах ҫырнӑскере пысӑк пичете халиччен сӗнмен. Акӑ вӑл:

Ялта шӑпах. Пӗтмен-ши пурнӑҫ?..
Вӗрмен пӗр йытӑ та пулин, –

Выçăпала аптранă пулнă,
Ачи хӳхленĕ тахăшин.

Кĕтмен çĕртен çӳле çĕкленнĕ
Пĕртен-пĕр чĕвĕлти чĕкеç.
Çын инкекне курса эрленнĕ,
Пĕччен ял çийĕн вĕçнĕ çеç.

Пĕрре çĕрле вăл асăрханă
Çич тӳпери çич çăлтăра.
Ăна малашлăх хыпарланăн
Çав çăлтăр çиçнĕ йăлтăрах.

Анчах вăл хăвăрт сӳннĕ, çăлтăр
Çын кĕтнĕ пек ялтăрайман.
Тӳре-шарашăн йăлт тĕп пултăр, –
Ăна сĕм тĕттĕмре аван.

Чĕкеç çил каснă. Вăл – илемлĕ,
Вăл шаннă Çăлтăр тухасса.
Пĕрре Анаткаса иленнĕ,
Тепре çĕкленнĕ Тукаса.

Кĕтни чăнах та çитрĕ. Çăлтăр
Калллех çĕкленчĕ тӳпене.
Сӳнми çунать вăл йăлтăр-йăлтăр,
Телей кӳрсе Чăваш Ене.

Ваçça Аниççи çуралса ӳснĕ районăн хаçатĕнче ĕçленĕ май эпĕ унпа вăл «тупăнсанах» çыхăну тытма пуçланă. Вăл райхаçата «пĕчĕк пресса» тесе тиркесе тăмастчĕ, хайĕн çĕнĕ сăввисене ярсах тăратчĕ. Вĕсем пичетленсе тухсан ача пек савăнатчĕ. Вăрăм пурнăç пурăнса ирттернĕскер хайĕн çамрăк чухнехи сăпайлăхне, тирпейлĕхне, ырă кăмăлне, тӳрĕлĕхне, пĕчĕк пулăмшăн та туллин савăнма та тĕлĕнме пултаракан кăмăлне çаплипех упраса хăварни сисĕнетчĕ.

Паллах, ку чухнехи поэзи шайĕпе хакласан унăн сăввисенче тиркемелли те çук мар пулĕ. Çакна Стихван Шавлы поэт унăн малтанхи кĕнеки валли çырнă умсăмахра питĕ те вырăнлă асăрхаттарса каланă:

«Чăн та, хальхи чăваш поэзи тӳпинчен пăхсан Ваçça Аниççи сăввисем ачалларах» пек те туйăнма пултараççĕ, вĕсенче кăткăс метофорăсемпе кĕтмен инверсисем те курăнмаççĕ, çемми-кĕввипе ритми те – тахçанхи, «авалхи», сăввисене çырма та «питĕ уçă», «тӳрем» çырнă», – тет С.Шавлы. Малалла çапла хушса хурать: «Чим-ха, ун чухне вара мĕнлерех çырмалла пулнă-ши? Тĕттĕмри халăх валли ытларах эрешсĕр, сăмахпа шухăша пат татса çырмалла пулманши? Çамрăк хĕрĕн чечен чунĕ çапла хушнă, çапла вăл çырнă та. Вĕсенче «систерсе» каланă вырăнсем те чылай. Çав сăвăсене тăван поэзийĕмĕрĕн шурăм-



*Ваçça Анисçине юлашки çула ăсатнă самант.*

пуçĕ çĕкленсе килнĕ вăхăтра çырнă, вĕсен пахалăхĕ, пурнăçлăхĕ, чăвашлăхĕ, кăмăлĕ-интересĕ шăп çавă та ĕнтĕ. Ваçça Анисçин пултарулăхне чаплă вырăсăн Алексей Васильевич Кольцовăн пултарулăхĕпе танлаштарма пулать».

Ку вăл – питĕ пысăк та тĕрĕс хак. Унăн поэзийĕ – халăх пултарулăхне питĕ çывăх, унран тӳрремĕнех пуçланса кайнă поэзи, хăйĕн сĕткенлĕ вăйне вăл çав тымартан илнĕ, унăн сиплĕ çăлкуçĕпе имленсе аталаннă. 20-мĕш ĕмĕрĕн чи пуçламăшĕнчи чăваш çыравçисем пурте çапла çырнă. Кашни хăй пултарнă таран. Çĕнĕ саманари поэзи патне Çеçпĕл Мишшин реформи хыççăн тин çул уçăлнă. Ку – урăх калаçу. Çавăнпа унран «урăхла», «ку чухнехилле» çырнине кĕтни çут çанталăк пулăмне хирĕçленĕ пекех пулнă пулĕччĕ. Шел, çакна Ваçça Анисçи хăй пурăннă чух вĕçне çитиччченех тивĕçлĕ хак параймарăмăр пулас. Вăл тек кăсăклантарма пăрахнă пек туйăнатчĕ. Çакă ватă çынна пăшăрхантаратчĕ, кулянтаратчĕ. Кун çути курман сăввисем те чылайччĕ-ха унăн. Хăшĕпĕри пирĕн райхаçатра тухкаланă-ха, ыттисен шăпи мана паллă мар.

«Литература пурнăçĕнчен юлнă» ватă çыравçăна вулакан умне кăларма тепĕр чух профессионал пулăшăвĕ те кирлĕ пулнă ĕнтĕ, паллах. Шăйрăксем опытлă редактор кусне тӳрех тăрăнаççĕ. Анчах кунта чи малтан автор стилĕпе чĕлхине упраса хăварма тăрăшмалла ĕнтĕ, вĕсене пăсасран питĕ асăрханса ĕçлемелле.

Ваçça Анисçи райхаçата ярса панă сăввисене пичете сахал мар хатĕрленĕ эпĕ. Çапла «Ĕмĕт çитрĕ» кĕнекери «Чăвашсем Мускаври» тата «Луноход-1» сăвăсем чи малтан Чăнлă районĕнчи хаçатра çапăнса тухнăччĕ. Кĕнекене кĕмесĕр юлнисем те çук мар. Юсанă хыççăн автор кăмăллă юлсан редактор хăй тивĕçне чыслăн пурнăçланă теме пулать. Акă Ваçça Анисçи çырăвĕсенчи хăш-пĕр йĕрке:

«Чăвашсем Мускавра» сăвва ярса паратăп. Хаçата кĕртме май пулсан Хĕрарăм праçникĕ тĕлне пичете кĕртеймĕр-и?» (13.02.71).

«Тавах «Тĕл пулăва» литература картине кĕртнĕшĕн! Аван пек туйăнать мана» (29.07.72).

Манăн килти архивра Ваçça Анисçин çырăвĕсем самай упранатчĕç. Эпĕ вĕсене хам Анисçа аппа çулне çитсен Шупашкарти Гуманитари институчĕн архивне упрама патăм.

Вăл вилес умĕн (унăн чĕри 1975 çулхи раштав уйăхĕн 17-мĕшĕнче тапма чарăннă) кăшт маларах, 1974 çулта, унăн ватă сыннăн хурлăхлă шăпи çинчен çырнă «Çĕнĕ хваттерте» сăввине районта «Канаш» хаçатра пичетлесе кăларнăччĕ. Кун пирки вăл мана çапла çырса пĕлтернĕччĕ: «Эпĕ вăл сăвва 1965 çулсенче хама хваттер париччен çырнăччĕ. «Ком.ялавне» Юрьев патне ярса патăм. Пичете кĕртмерĕç. Рифмисем килсе кайманнипе пуль терĕм. Çав кунсенче «Коммунизм ялавĕ» çинче статья пичетлесе кăларчĕç. Пĕр хĕрарăм (ятне маннă) çырать хăй хунямăшĕпе пит килĕштерни çинчен мухтанса.

Ку ĕнтĕ ман сăвва вуласа тухнă та мана питлесе çырать тесе шутларăм ун чухне. Начаррине çырмалла мар, аваннине çеç çырма хушаççĕ иккен терĕм».

Манăн килти архивра унăн «начарри» çинчен çырнă тата икĕ сăвви тупăнчĕ. Вĕсем те пурнăçран илнĕ ӳкерчĕксем. Кун пирки автор ăнлантарса панисем пур: «Ку япала 1966 çулта Малыкра пулса иртнĕччĕ. Эпĕ Колясем патĕнчеччĕ вăл вăхăтра... Учительница упăшки ӳсĕрпе кăшт кăна çуртне çунтарса яман. «Ӳсĕр хуçа» сăвва эпĕ çавăн чухне çырнăччĕ. Халĕ рифмисене килтерсех çыртăм».

Иккĕмĕш сăвви пирки: «Халĕ тата тепĕр сăвă çыртăм. Ку ача-пăча сăмахĕсене эпĕ хам илтрĕм. Пӳрт умĕнче выляса çӳрекен пĕчĕк хĕрачасем калаçаççĕ:

– Сан аçу ăçта? – тет пĕри вырăсла.

– На рыбалке, – тет тепри.

– А мой на пьянке, – тет леш.– Придет домой, будет драться.

– Чем с таким папой жить, я лучше без папы проживу, – тет виççĕмĕш.

Унăн, чăнах та, ашшĕ çук».

Вун-вун çул иртсен эпĕ пурнăçри тӳнтер енсене питлекен Ваçça Аниççи сăввисене «Канаш» хаçатра пичетлесе кăлартăм. Ман шутпа вĕсен пĕлтерĕшĕ паян кун та çухалман.

# Ваçça Аниççи питлет

***(«Канаш» хаçат, 29 №, 2007 ç., утă, 19)***

**ÇĔНĔ ХВАТТЕРТЕ**

Хваттер лайăх – калама çук,
Ваннăй та пур, кухня та.
Сĕрĕм те çук, хăрăм та çук,
Вĕрет чей те, яшка та.

Кантăксене чĕнтĕр карнă,
Шифоньер пур пӳлĕмре,
Урайсене кавир сарнă,
Телевизор – кĕтесре.

Илемлетнĕ, тирпейленĕ
Ик пӳлĕмлĕ хваттерне.
Анчах пӳлĕм масине
Ярать ватă асанне.

Диван çинче карчăк выртать
Чирĕпеле ахлатса.
Пĕр кĕрет кинĕ, пĕр тухать
Çиллипеле вашлатса.

Пысăк хваттер илес тесен
Çемье йышлăрах кирлĕ.
Кайран, хваттерне кĕрсессĕн,
Карчăкĕ кама кирлĕ?

Çатма çинче çу чашкăрать –
Кин икерчĕ пĕçерет.
Ачисене ăс вĕрентет,
Диван енне кăтартать:

«Ку дивана салатмалла,
Пружинисем ун начар.
Урăх сăрпа сăрламалла,
Атьăр ăна салатар!»

Диван çинче ват асанне
Выртать пĕрмай ахлатса.
Атьсем диван пăтисене
Кăлараççĕ ухлатса.

Асламăшĕ вĕсем çине
Пăхса тăрать хурланса.
Салатаççĕ вĕт диванне.
Ăçта каймалла тăрса?

Кĕççе питлĕ ăссăр çынсем
Пур-ха пирĕн хушăра.
Ватăлмĕç-ши вĕсем хăйсем
Пурăнан пурăнăçра?

1974.

### ЎСĔР ХУÇА

Хĕрлĕ, сарă курăнаççĕ
Йывăççенĕн çулçисем.
Кĕрхи çилпе тăкăнаççĕ –
Çаралаççĕ йывăççем.

Ăшă енне карталанса
Вĕçеççĕ хур кайăксем.
Урамалла сумка йăтса
Иртеççĕ шкул ачисем.

Çĕрĕпеле сывăрмасăр
Наçта кĕтрĕ мăшрине.
Ырлăха мар, татах ўсĕр
Таврăнать пуль вăл килне.

«Ĕçлет, ĕçет ĕç укçине
Шывах кайса пăрахать.
Итлес килмест харкашнине», –
Тесе Наçта тарăхать.

Ав, вăл килет тайкаланса,
Ĕнтĕ çитрĕ пўрт умне.
Наçта шурă пўртрен тухса,
Вĕлтлетрĕ аслăк хыçне.

Ўсĕр хуçа кăкăр çапса:
«Эп кам?!» – тесе кăшкăрать.
Пўрте кĕрет çапкаланса,
Никам çуккине курать.

Çўçĕ-пуçĕ тăрмаланнă,
Тискер пăхаç куçĕсем.
Чăмăрсене чăмăртанă,
Пылчăк кăна тумĕсем.

Сĕтелсене, тенкелсене
Тапа-тапа сирпĕтрĕ.
Чашки-тирки, куркисене
Çĕре çĕклесе çапрĕ.

«Чупин-чупин, макăрмастăп! –
Тесе вăрçать арăмне.
– Пĕр тумне те хăвармастăп!» –
Тет çĕклесе пурттине.

Наçтин çĕвĕ тумĕсене
Ваклать Назар пуртăпа.
Пуçтарать те татăксене
Тивертесшĕн шăрпăкпа.

«Мĕн ĕçлен?» – тени илтĕнчĕ
Ўсĕр хуçан хăлхине.
Халь те кўрши пырса кĕчĕ –
Çунтаратчĕ вĕт пўртне!

Ўсĕршĕн тинĕс шывĕ те
Чĕркуççи таран теççĕ.
Ӳрă чух ăслă çынсем те
Ĕçсен ухмахланаççĕ.

Ноябрь, 1974.

**ТАМАРА ТАРĂХАТЬ**

Хĕрачасем пӳрт умĕнче
Лараç хĕвел ăшшинче.

Хăйсем – таса, тирпейлĕ,
Пуканисем илемлĕ.

– Ман хĕр маттур, макăрмасть,
Амăшне чăрмантармасть, –
Тесе пĕри юр юрлать,
Пуканине çупăрлать.

– Аçу килте-и, Нина? –
Тесе ыйтать Ульяна.
– Атте кайрĕ вăрмана,
Кӳршĕсемпе кăмпана, –
Хуравлать леш юрласа,
Пуканипе выляса.

– Улька, сан аçу ăçта?
Килте лармасть пуль вăл та?
– Пулла кайрĕ ман атте.
Таврăнмасть вăл каçчен те.

Аттесемпе мĕн тăван,
Канмалли кун вĕт паян?
Пĕрин ашшĕ кăмпара,
Теприн ашшĕ пулăра.

– Манăн атте сăрара, –
Тет пĕчĕкçĕ Тамара.
Сăра ĕçсе савăнать,
Виле ӳсĕр таврăнать.

Çапкаланать, кăшкăрать,
Пире хуса кăларать, –
Пĕчĕк ача тарăхса
Йĕре-йĕре калаçать.
Ун сăмахне итлесе
Ват чĕре пăшăрханать.

Ĕçкĕ сиен кӳнине
Пурсăмăр та пĕлетпĕр.
Çапах та хăнасене
Эрехпелех сăйлатпăр.

Мĕнле йывăр ĕçсем те
Пурнăçланаç ăмăртсан.
Ĕçме пăрахасси те
Пулатех çине тăрсан.

1974.

1920 çулта Чĕмпĕрти чăвашла çыракансен ушкăнĕ "Атăл юрри" журналăн пĕрремĕш номерне кăларса янă. Шел пулин те, журналăн ĕмĕрĕ вăрăм пулайман, икĕ номер хыççăнах хупăнса ларнă. 2000 çулта эпир ăна "Канаш" хаçат çумĕнче тепĕр хут чĕртсе яма пултартăмăр. Унта эпĕ Ваçça Аниççин сăввисемпе калавĕсене тĕплĕн тишкерсе тухнăччĕ. Статья "Ваçça Аниççин поэзийĕ пирки пĕр-ик сăмах" ятлă. Пасар саманинче, мĕнпур япалана сутса илме тытăнсан, журнала малалла кăларма май килмерĕ. Телее, акă, хальхи хаçата тытса тăракансем чăваш чунне ăнланса ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсем тăрăшнипе журнал чĕрĕлчĕ.

Ваçça Аниççин 120 çулхи юбилейне анлăн палăртма пултартăмăр эпир. Вăл çуралса ӳснĕ Анат Тимĕрçенти вăтам шкул çуртне унăн асăну хăми илемлетрĕ (барельф авторĕ – хамăр ентеш, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Николай Кондратьев скульптор). Шупашкартан Аслă Нагаткин район центрне хĕрарăм-поэтсемпе юрă ăстисен пысăк ушкăнĕ килсе çитрĕ: Светлана Асамат, Раиса Сарпи, Лидия Сарине, Нина Пăрчăкан поэтсем, Надежда Заводская юрăç-композитор, ЧНК Президенчĕн çумĕ Эдуард Бахмисов, телевиденипе радио журналисчĕсем. Пысăк концерт программи хатĕрлесе килнĕ вĕсем. Çак асран кайми тĕлпулăва вырăнти ятлă-сумлă культура ĕçченĕ Валентина Тарават ертсе пычĕ. Концерта вырăнти пултарулăх ушкăнĕсем те хутшăнчĕç. Хăнасемпе

пĕрле Анат Тимĕрçен шкулĕнчи аслă классенче вĕренекен хĕрачасем Ваççа Аниççин сăввисене вуларĕç. Эппин Ваççа Аниççи çаплах пирĕнпе пĕрле, унăн çутă сăнарĕ яланах тăван халăх асĕнче.

Хамăн çак аса илĕве эпĕ чăваш поэзийĕн пирвайхи чĕкеçне халалласа асăну хăми уçнă уяв тĕлне çырнă çак сăвăпа вĕçлесшĕн:

## ВАÇÇА АНИÇÇИНЕ

Пурччĕ, пур ман икĕ Турă,
Чи кирли те чи пахи:
Малтанхи – литература,
Иккĕмĕш – чăваш чĕлхи.

Революциччен çырни те –
Чун валли апат пекки –
Илĕртетчĕ мана питĕ
Чăн поэзи кĕнеки.

«Ялта» ятлă пĕчĕк сăвă
Тыткăнларĕ пĕрреччен.
Выçă, аран юлнă сывă
Сăпкари ача çинчен.

«Хыпарта» вăл тухнă пулнă
Çапăнса вăхăтĕнче.
Унтанпа сахал-и юхнă
Шыв-шур, улшăннă тĕнче.

«Т.В.А.» тесе ал пуснă
Авторĕ сăвви айне.
Лайăх сăвă асталанă,
Килтерсе майне-шывне.

Кам вăл пулнă, çав ăстаçă –
Ялти кивĕ чир-чĕре
Питлекенĕ халь ăçта-ши –
Паллă марччĕ вăл пире.

Кун-çулсем татах та шурĕç,
Пирĕн яшлăх иртнĕçем.
Сăвă авторне те тупрĕç
Пичетри тĕпчевçĕсем.

«Т» – «Тимĕрçенсем»-мĕн пулнă,
«В.А.» – «Ваççа Аниççи».
Хăй çапах ыр-сывă юлнă, –
Вăрттăнлăх çарин уççи.

Вăл çаплах вĕçсе çӳренĕ,
Пирĕн малтанхи чĕкеç.
Ача çуратса ӳстернĕ –
Кăткăсланнă ĕçĕ çеç.

Чĕри çуннă ун кăварлă,
Сирнĕ пур тумхахсене.
Вăл ялта çутта кăларнă
Чăвашсен ачисене.

Ĕçĕ ку та пулнă сумлă,
Кирлĕ пулнă халăха.
Вăл пурне те ырă суннă,
Мала хунă çынлăха.

«Тупăнсан» каллех çĕклерĕ
Хăйĕн çăмăл çунатне.
Халăх чыслăн хисеплерĕ
Сумлă ĕçĕпе ятне.

Эпĕ те унпа тĕл пулăм,
«Телее!», – тесе калар.
Хӳтлевçи пулса та куртăм, –
Чăн сăмах ку, суя мар.

Малтанхи чăваш чĕкеçĕ
Таврăнчĕ тăван ялне.
Ят-сум кӳчĕ унăн ĕçĕ
Анатри Тимĕрçене.